Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 5-мӗшӗнчен тухать

*86 (8250) №* * *Кӗҫнерни кун, 2014 ҫулхи чӳк (ноябрь) уйӑхӗн 6-мӗшӗ* * *Хакӗ ирӗклӗ*

## Хамӑр продукцие анлӑрах ҫул парар



Ыранхи кун аталанӑвӗ хамӑр туса ирттернине епле пӗтӗмлетнинчен, умри ӗҫ-хӗл ҫине эпир паян мӗнле пӑхнинчен, тӗллевӗмӗрсене татса парассипе ҫак самантра епле тимленинчен пуҫланать. Пурнӑҫ аталанӑвӗ ҫапла ыйтать. Ку сӑмахсем хресчен ӗҫӗ-хӗлӗпе те тачӑ ҫыхӑннӑ. Тӗнчери лару-тӑру пирӗн сӗтел ҫинче хамӑр туса илнӗ продукци ытларах пулмаллине ыйтать. Чӑваш Республикин Пуҫлӑхӗпе Михаил Игнатьевпа ЧР Министрсен Кабинечӗн Председателӗн ҫумӗ – ял хуҫалӑх министрӗ Сергей Павлов та хӑйсен ӗҫӗнче ҫак тӗллеве приоритетлӑ тесе палӑртаҫҫӗ.

Паян ялта пурӑнакан ҫӗр ӗҫӗнче тӗрлӗ харпӑрлӑх формине аталантарса вӑл е ку бюджета пуянлатассипе тӑрӑшать. Ку ӗҫре вара ҫӗр ӗҫченӗсем пӗр ҫыхӑра пулни пысӑк пӗлтерӗшлӗ. Ҫакна ялта пурӑнакан кашни ҫын лайӑх ӑнланать. Халӗ каланине юпа уйӑхӗн 31-мӗшӗнче Чӑваш патшалӑх оперӑпа балет театрӗнче иртнӗ республикӑри ҫӗр ӗҫченӗсемпе ял хуҫалӑх продукцине тирпейлекен промышленноҫра вӑй хуракансен савӑнӑҫлӑ уявне хутшӑннисем те курӑмлӑ ӗнентерчӗҫ. Апла пулсан пирӗн ял хуҫалӑхӗпе продукци тирпейлекен промышленность пурӑнать тата аталанать.

**(Вӗҫӗ 3-мӗш стр.)**

**Сӑн ӳкерчӗкре: С. Сретинскийпе В. Горбунов фермерсен тӗллевӗ – мӗн тунипе лӑпланмасӑр малашлӑхпа ӗҫлемелле.**

Республикӑра

## Преми укҫипе – ача сачӗ

Октябрӗн 30-мӗшӗнче Раҫҫей Федерацийӗн Правительствин ларӑвӗнче Раҫҫей Федерацийӗн субъекчӗсен ӗҫ тӑвакан влаҫ органӗсен 2013 ҫулхи ӗҫ-хӗлне хак панин кӑтартӑвӗсемпе грант шучӗпе бюджетсем хушшинчи трансфертсем уйӑрса парассин ыйтӑвне сӳтсе явнӑ. Пӗтӗмӗшле сумма 3 млрд. та 484 млн. тенкӗпе танлашать. Чӑваш Республики асӑннӑ хаклав енӗпе 20-мӗш вырӑнтан 14-мӗш вырӑна хӑпарма пултарнӑ, ҫапла вара республика 165 млн. та 59 пин тенкӗ премие тивӗҫет.

Кун пирки республика Пуҫлӑхӗ Михаил Игнатьев муниципалитет районӗсемпе хула округӗсен ертӳҫисемпе ноябрӗн 1-мӗшӗнче видеоконференци ирттернӗ чухне пӗлтернӗ.

"Ку преми укҫипе эпир Шупашкар хулин пӗр микрорайонӗнче ача сачӗ туса лартӑпӑр. Хула администрацийӗ строительство ӗҫӗсен вырӑнне палӑртма тивӗҫ", – тенӗ Михаил Васильевич.

Видеоконференцире ҫӗнӗ урамсене электрификацилессин тата ресурссемпе тивӗҫтерсе тӑракан организацисен аллине парассин, грипп чирӗн иммунопрофилактикине ирттерессин, шкул ҫулне ҫитмен ача-пӑча учрежденийӗсене хута ярассин, потребительсене пахалӑхсӑр алкоголь продукцийӗнчен хӳтӗлессин, муниципалитет харпӑрлӑхӗнчи гидротехника сооруженийӗсене капиталлӑ юсама 2016 ҫулта федераци бюджетӗнчен укҫа-тенкӗ уйӑрма проектпа смета документацийӗсене туса хатӗрлессин ыйтӑвӗсене сӳтсе явнӑ.

## Ӗмӗрхи истори пӗр ҫемьене пӗрлештернӗ

Ноябрӗн 4-мӗшӗнче Чӑваш Ен Пуҫлӑхӗ Михаил Игнатьев "Чӑваш Республикинчи халӑхӑн этнокультура аталанӑвӗ" ятпа ҫавра сӗтел ӗҫне хутшӑннӑ. Ӑна Халӑх пӗрлӗхӗн кунне халалласа ирттернӗ.

Республика Пуҫлӑхӗ ҫавна палӑртнӑ. Аслӑ Раҫҫей ҫӗршывӗн нумай ӗмӗре тӑсӑлакан историйӗнче унӑн территорийӗнчи халӑхсем пӗр ҫемье пулса тӑнӑ, вӗсен шӑписем пӗр-пӗринпе тачӑ ҫыхӑннӑ. Ҫапах та ӗмӗрсем хушшинче Раҫҫей халӑхӗсем чи пӗлтерӗшлине – хӑйсен наци культурине, чӗлхине, традицийӗсене, ӗненӗвне ҫухатман.

Украинӑран тарса килекенсене Чӑваш Енре килти пек йышӑнни те, Шупашкарта октябрь уйӑхӗнче Пӗтӗм тӗнчери спорт форумне тивӗҫлӗ шайра ирттерни те чӑвашсем ытти халӑхсемпе тачӑ ҫыхӑнура пулнине ҫирӗплетсе параҫҫӗ.

* * *

Ҫав кунах "Раҫҫей халӑхӗн пӗрлехи ҫемйи" ятпа Шупашкарта Чӑваш патшалӑх оперӑпа балет театрӗнче наци культурисен республикӑри фестивалӗ иртнӗ. Фестивале Чӑваш Ен Пуҫлӑхӗ Михаил Игнатьев та хутшӑннӑ, салам сӑмахӗ каланӑ.

Сывлӑх кунӗ

## Афганецсене пухатпӑр

Паянхи общество пурнӑҫӗнче сывӑ пурнӑҫ йӗрки малти вырӑна тухрӗ. Патшалӑх органӗсем, обществӑлла организацисем ӑна аталантарас ӗҫе ытлӑ-ҫитлӗ тӳпе хываҫҫӗ. Ҫакӑнта районти интернационалист-салтаксем те пысӑк вырӑн йышӑнаҫҫӗ. 1979 – 1989 ҫулсенче Афганистан вӑрҫине хутшӑннисем хӑрушӑ вӑрҫӑ пирӗн салтаксен тата вӗсен ашшӗ-амӑшӗсен чӗрисене нихӑҫан та ан ыраттарччӑр тесе мирлӗ те сывӑ пурнӑҫ йӗркине аталантарассипе чылай ӗҫ туса ирттереҫҫӗ.

Шӑмат кун, чӳк уйӑхӗн 15-мӗшӗнче, "Сывлӑх" физкультурӑпа спорт комплексӗнче Афганистан вӑрҫине хутшӑннӑ интернационалист-салтаксен сывлӑх кунӗ пулать. Асӑннӑ вӑрҫӑна хутшӑнса инвалид пулнисен районти уйрӑмӗ сывлӑх кунне интернационалист-салтаксене мӑшӑрӗсемпе пӗрле хутшӑнма чӗнет. Спорт комплексӗнче ҫак кун индивидуаллӑ майпа шывра ишессипе, шашкӑлла выляссипе, дартс вӑййипе, АКМ сӳтсе пуҫтарассипе, турник ҫинче туртӑнассипе, вырӑнтан тӑршшӗне сикессипе ӑмӑртусем пулӗҫ. Вӗсене ӗнерхи салтаксемпе вӗсен мӑшӑрӗсем активлӑ хутшӑнасса кӗтетпӗр. Ҫӗнтерӳҫӗсем валли призсем, медальсемпе дипломсем хатӗр.

**К. ПЕТРОВ,**
**Афган вӑрҫин инваличӗсен районти уйрӑмӗн пуҫлӑхӗ.**

Ҫӑмӑллӑхсемпе усӑ куракансене пӗлме

## Социаллӑ страховани фончӗ тивӗҫтерӗ

Ку таранччен ҫӑмӑллӑхсемпе усӑ курма тивӗҫлӗ граждансене, вӑл шутра инвалидсене те, реабилитацин техника хатӗрӗсемпе, протезпа ортопеди изделийӗсемпе тивӗҫтерессишӗн, санаторисемпе курортсене сипленме кайма путевкӑсем уйӑрса парассишӗн Чӑваш Республикин Сывлӑха сыхлассин тата социаллӑ аталану министерстви яваплӑ пулнӑ. Ку йӗрке кӑҫалхи декабрӗн 31-мӗшӗччен ҫаплипех сыхланса юлать. Апла пулсан ҫӑмӑллӑхсемпе усӑ курма тивӗҫлисенчен протезпа ортопеди изделийӗсемпе тивӗҫтерме, путевкӑсем уйӑрса пама заявленисене кӑҫал Чӑваш Республикин Сывлӑха сыхлассин тата социаллӑ аталану министерствинчех йышӑнаҫҫӗ.

Ҫитес ҫулхи январӗн 1-мӗшӗнчен тытӑнса вара ку полномочи РФ Социаллӑ страховани фончӗн Чӑваш Республикинчи регион уйрӑмӗ ҫине куҫать. Унӑн адресӗ: Шупашкар хули, Ярославская урам, 56-мӗш ҫурт. Республикӑри хуласемпе районсенче социаллӑ страховани фончӗн представительствисем пур. Ҫапла вара ҫӑмӑллӑхсемпе усӑ курма тивӗҫлисен 2015 ҫулхи январӗн 1-мӗшӗнчен тытӑнса хӑйсен заявленийӗсемпе социаллӑ страховани фончӗн республикӑри уйрӑмне е унӑн хуласемпе районсенчи представительствисене пымалла пулать.

Сыхӑнмалли телефон: (8352)30-39-32.

**РФ Социаллӑ страховани фончӗн Чӑваш Республикинчи регион уйрӑмӗн пресс-служби.**

Ҫырӑнтару – 2015

## Эсир хаҫат ҫырӑннӑ-и?



**Хаклӑ вулаканӑм! "Ҫӗнтерӳ ялавӗ" хаҫата 2015 ҫулхи январь уйӑхӗнчен илсе тӑма ҫырӑнтараҫҫӗ. Апла пулсан почтальонсемпе тӗл пулма васкӑр. "Ҫӗнтерӳ ялавӗ" хаҫата 6 уйӑха ҫырӑнмалли хак – 347 тенкӗ те 28 пус.**

**"Ҫӗнтерӳ ялавӗ" хаҫата ҫитес ҫулхи 6 уйӑх валли ҫырӑнакансене стена ҫине ҫакмалли 2015 ҫулхи тӗслӗ календарь парнелетпӗр.**

Культура ҫулталӑкӗ

## Раҫҫей шайӗнчен хушма пулӑшу уйӑраҫҫӗ

Октябрӗн 29-мӗшӗнче Чӑваш Республикин культурӑпа наци тата архив ӗҫӗсен министрӗ Вадим Ефимов Раҫҫей Федерацийӗн Культура министерствине ӗҫлӗ ҫул ҫӳревпе пулнӑ. Кунта Раҫҫей Федерацийӗн "Культурӑпа туризма аталантарасси" патшалӑх программин "Туризм" хушма программи шайӗнчи регионсем хушшинчи тата регионти чи ӑнӑҫлӑ проектсене кӑҫал федераци бюджетӗнчен патшалӑх тӗревӗ (грант) парасси пирки, Раҫҫей Федерацийӗн "Культурӑпа туризма аталантарасси" патшалӑх программин "Еткер" тата "Искусство" хушма программисем шайӗнчи муниципалитет тата регионти культура учрежденийӗсен комплекслӑ аталанӑвӗ валли кӑҫал федераци бюджетӗнчен патшалӑх пулӑшӑвӗ (грант) уйӑрассин килӗшӗвӗсене алӑ пуснӑ.

Ҫапла вара федераци бюджетӗнчен республика шайне "Чӑваш Республикинчи 2014 ҫулхи культура событийӗсен марафонӗ" регион тата регионсем хушшинчи проектсен мероприятийӗ валли 8,6 миллион тенкӗ, ҫавӑн пекех ҫӳлерех асӑннӑ иккӗмӗш ӗҫ-хӗле пурнӑҫлама, вӑл шутра материалпа техника базине ҫӗнетме, ятарлӑ оборудовани туянма, ятарлӑ автотранспортпа тивӗҫтерме 20,6 миллион тенкӗ укҫа килӗ.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Районта

## Уява хатӗрленер

**Район администрацийӗн пуҫлӑхӗн октябрӗн 29-мӗшӗнчи 298 номерлӗ хушӑвӗпе килӗшӳллӗн район территорийӗнче вырнаҫнӑ администраци ҫуртйӗрӗсене, урамсемпе тӗп лапамсене, тӗрлӗ харпӑрлӑхри организаципе учреждени офисӗсене Ҫӗнӗ ҫул уявӗ ҫитсе пынӑ май вӗсене илемлетессине ноябрӗн 15-мӗшӗччен вӗҫлемелле.**

# Авариллӗ ҫурт-йӗртен куҫарасси малалла пырать

Пурӑнмалли ҫурт-йӗр ыйтӑвӗпе

Раҫҫей Федерацийӗн тата Чӑваш Республикин Правительствисен йышӑнӑвӗсемпе килӗшӳллӗн авариллӗ ҫурт-йӗрти ҫынсене 2013 – 2015 ҫулсенче хӑтлӑ хваттерсемпе тивӗҫтерме йышӑннӑ. Пӗтӗмӗшле лару-тӑрӑва шута илсе асӑннӑ программа шайӗнче ӗҫлессине 2017 ҫулхи сентябрӗн 1-мӗшӗ тӗлне вӗҫлеме палӑртнӑ. Ҫапла вара 174,3 пин тӑваткал метр чухлӗ авариллӗ ҫурт-йӗр пӑрахӑҫа тухмалла.

Ку тӗллевпе пӗтӗмпе Чӑваш Енре тӗрлӗ ҫӑл куҫри 4,979 миллиард тенкӗ укҫапа усӑ курма палӑртнӑ, вӑл шутран 2,106 миллиард тенкӗ – республика бюджетӗнчен, 2,436 миллиард тенкӗ – Патшалӑх корпорацийӗ – пурӑнмалли ҫурт-йӗрпе коммуналлӑ хуҫалӑха реформӑлассин фондӗнчен, 312 миллион тенкине вырӑнти бюджетран усӑ курма палӑртнӑ, 125 миллион тенкине бюджет мар ҫӑл куҫран явӑҫтараҫҫӗ. Пӗтӗмпе пилӗк ҫул хушшинче республикӑри 13 пин те 300 ҫын ытла (5048 пин ҫемье) ҫын хӑтлӑ ҫурта куҫать.

Чӑваш Республикин Строительство ӗҫӗн министерстви пӗлтернӗ тӑрӑх халӗ республика шайӗнче "Чӑваш Республика территорийӗнчи авариллиӗ ҫурт-йӗр фондӗнчи граждансене куҫарасси" 2013 – 2017 ҫулсенче пурнӑҫламалли адреслӑ программа ҫирӗплетнӗ. Унӑн пӗрремӗш тапхӑрӗ 2013 – 2014 ҫулсенче вӑя кӗнӗ май унӑн шайӗнче ҫак вӑхӑтра республикӑра пӗтӗмпе 1376,5 миллион тенкӗлӗх ҫурт-йӗр условийӗсене лайӑхлатас ӗҫ пурнӑҫланмалла, 1,4 пин ҫемьене е 3,8 пин граждана хӑтлӑ ҫурта куҫармалла. Ҫӳлерех асӑннисене тӗпе хурса район территорийӗнче те тӗллевлӗ программа пурнӑҫланать. Халӗ 2013 – 2015 ҫулсенче вӑя кӗртмелли ӗҫ-хӗл тапхӑрӗ пырать.

Район администрацийӗн капиталлӑ строительство тата обществӑлла инфраструктурӑна аталантарассин управленийӗ пӗлтернӗ тӑрӑх кӑҫал ҫынсене авариллӗ ҫурт-йӗртен куҫарассипе пурнӑҫлама палӑртнӑ ӗҫсем ҫапларах. Ятарлӑ комисси ҫирӗплетнипе Мӑн Сӗнтӗрти нумай хваттерлӗ 9 ҫурт (Ленин урамӗнчи 33-мӗш тата 73-мӗш номерлӗ ҫуртсем, Новая урамри 2-мӗш, 13-мӗш тата 15-мӗш номерлӗ ҫуртсем, Советская урамри 1-мӗш, 3-мӗш тата 22-мӗш номерлӗ ҫуртсем, Учительский тӑкӑрлӑкри 12-мӗш ҫурт), Муркашри нумай хваттерлӗ 3 ҫурт (Октябре 50 ҫул урамри 26-мӗш тата 32-мӗш номерлӗ, Гагарин урамӗнчи 12-мӗш номерлӗ ҫурт) авариллӗ шутланаҫҫӗ.

Мӑн Сӗнтӗрте 72 ҫын пурӑнмалли ҫурт-йӗр условине лайӑхлатӗ: пӗрремӗш тапхӑрта – 31 ҫынна 19 хваттере, иккӗмӗш тапхӑрта 41 ҫынна 22 хваттере куҫарма палӑртнӑ. Ҫӳлерех асӑннӑ йыш валли 1490,2 тӑваткал метр чухлӗ пурӑнмалли ҫурт-йӗр кирлӗ.

Муркашра асӑннӑ категорие куҫарма нумай хваттерлӗ ҫурт тума палӑртнӑ май 62 ҫынна 24 хваттерлӗ тумалла. Вӗсем валли 953,6 тӑваткал метр чухлӗ пурӑнмалли ҫурт-йӗр кирлӗ.

Ҫак ӗҫ йӑлтах патшалӑх шучӗпе пурнӑҫланать. 2013 – 2015 ҫулсенче ҫӗнӗ ҫурт-йӗр тӑвассине йӗркелеме пӗтӗмпе 68428298,4 тенкӗ уйӑрма палӑртнӑ. Вӑл шутран Патшалӑх корпорацийӗ – пурӑнмалли ҫурт-йӗрпе коммуналлӑ хуҫалӑха реформӑлассин фондӗнчен 42759782,01 тенкӗ, Раҫҫей Федераци субъектӗнчи бюджетран – 24295177,81тенкӗ, район бюджетӗнчен 1373338,58 тенкӗ.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Саламлатпӑр



Хаклӑран та хаклӑ юратнӑ тӑхлачӑна – Иштерек ялӗнче пурӑнакан **Раиса Ивановна КАЛИНИНӐНА** 70 ҫулхи юбилей ячӗпе чун-чӗререн тухакан чи ӑшӑ сӑмахсемпе саламласа ырлӑх-сывлӑх, иксӗлми телей, вӑрӑм кун-ҫул сунатпӑр. Тӑхлачӑ 70 ҫул тултарчӗ пулсан та хӑйӗн юратнӑ хурҫӑ утне пӑрахаймасть, ҫуркунне-кӗркунне ял халӑхне ака-суха тата ытти ӗҫ пурнӑҫлама пулӑшать. Пирӗн Раиса Ивановна чӑннипех те мухтава тивӗҫлӗ. Тӑхлачӑна малалла та нумай-нумай ҫул ывӑлу-кинӳсене, мӑнукусене савӑнтарса пурӑнма Турӑ сывлӑхне хушса кӑна тӑтӑр.

**Саламлаканӗсем: хӑтипе тӑхлачи, ывӑлӗсемпе кинӗсем, мӑнукӗсем, Грачевсен, Квасовсен, Пудовсен ҫемйисем, тӑванӗсем.**



Пирӗн хаклӑран та хаклӑ ҫыннӑмӑра, юратнӑ мӑшӑра, хисеплӗ аттене, кукаҫине, асаттене – Шаптак Муркаш ялӗнче пурӑнакан **Владимир Леонидович МАТВЕЕВА** 60 ҫулхи юбилей ячӗпе пӗтӗм чун-чӗререн саламлатпӑр. Юман пек ҫирӗп сывлӑх, юхан шыв пек вӑрӑм кун-ҫул, тату пурнӑҫ сунатпӑр. Ачусен, мӑнукусен хаваслӑ сассине итлесе, ырлӑхне курса савӑнмалла пултӑр.

Ҫак уйӑхрах пирӗн юратнӑ аннен, кукамайӑн, асаннен – Валентина Григорьевна МАТВЕЕВӐН та ҫуралнӑ кунӗ. Ӑна та эпир ҫирӗп сывлӑх, вӑрӑм кун-ҫул, иксӗлми телей, савӑнӑҫ сунатпӑр.

**Саламлаканӗсем: мӑшӑрӗ, 2 хӗрӗ, 2 кӗрӳшӗ, 7 мӑнукӗ.**



Юратнӑ ывӑлӑма, хисеплӗ пиччене, куккана – Муркашра пурӑнакан **Владимир Леонидович МАТВЕЕВА** сумлӑ юбилейпа – 60 ҫул тултарнӑ ятпа чун-чӗререн ӑшшӑн саламлатпӑр. Сывлӑху сан ҫирӗп пултӑр, ӗмӗрӳ вӑрӑм килтӗр, ырӑ кӑмӑлу нихҫан та ан пӗттӗр. Эпир сана питӗ юрататпӑр, санпа мухтанатпӑр, эсӗ пирӗншӗн – яланах ырӑ тӗслӗхре. Ҫемьере яланах килӗшӳ, юрату, ӑнланулӑх, ырӑ кӑмӑллӑх хуҫаланччӑр. Тӑвансемпе, ӗҫтешсемпе тата юлташсемпе яланах пӗрле килӗштерсе пурӑнмалла пултӑр.

**Саламлаканӗсем: амӑшӗ, йӑмӑкӗсем, Герасимовсен, Алексеевсен, Поляковсен, Матвеевсен ҫемйисем, мӗн пур ҫывӑх тӑванӗ.**

Оринин салинчи хаклӑ ҫыннӑмӑрсене – октябрь уйӑхӗнче ҫуралнисене – **Геннадий Егорович АКРАМОВСКИЕ, Ольга Ермолаевна ЕРМОЛАЕВӐНА, Николай Давыдович ИВАНОВА, Альбина Федоровна ТРИФОНОВӐНА, Ксенофонт Степанович ВАСИЛЬЕВА** ҫуралнӑ кунӗсемпе, **Ольга Осиповна ИВАНОВӐНА** сумлӑ юбилейпа чун-чӗререн саламлатпӑр, ырлӑх-сывлӑх, иксӗлми телей сунатпӑр.

**Саламлаканӗсем: Оринин салинчи ветерансем, вӗсен ертӳҫи Галина Иванова.**

Конкурс

## "Хӑрушсӑр Интернет"

"Ростелеком" уҫӑ акционерлӑ обществӑн макрорегионти "Атӑл" филиалӗ "Хӑрушсӑр Интернет" пултарулӑх конкурсӗ пуҫланни пирки пӗлтерет. Кунта 7 – 17 ҫулхи вӗренекенсем уйрӑм тата ушкӑнпа хутшӑнма пултараҫҫӗ. Вӗсен кӑмӑла кура хӑрушсӑр Интернет мелне сӑнлакан ӳкерчӗк, социаллӑ плакат, сӑвӑ е видеоролик тӑратмалла. Конкурс октябрӗн 30-мӗшӗнчен пуҫласа январӗн 30-мӗшӗччен пырать. Ҫӗнтерӳҫӗсене февралӗн 10-мӗшӗнче палӑртаҫҫӗ. Кашни хутшӑнакан дипломлӑ, ҫӗнтерӳҫӗ хаклӑ парнеллӗ (электрон девайс, дистанци управлениллӗ модельсем, йӑла техникин сертификачӗсем тата ытти те) пулӗ. Тӗплӗнрех www.events.volga.rt.ru/deti2014 сайтра паллашмалла.

## "Сывлӑх тата хӑрушсӑрлӑх – 2014"

Асӑннӑ конкурса ӗҫлекен ҫыннӑн пурнӑҫне тата сывлӑхне сыхласси ҫине тимлӗх ытларах уйӑрас тӗллӗшпе ирттереҫҫӗ. Номинаци чылай тӗрлӗ. Конкурсӑн пӗрремӗш тапхӑрӗ кӑҫалхи декабрӗн 31-мӗшӗччен пырать. Хутшӑнас текенсем "Эталон" Ассоциацийӗн www.aetalon.ru сайтӗнчи информаципе тӗплӗнрех паллашма пултараҫҫӗ. Электрон заявкӑсене ноябрӗн 20-мӗшӗччен ҫав сайта ҫырмалла.

Райадминистрацире

## Хисеп грамотипе наградӑланӑ

Ҫитӗнекен ӑрӑва вӗрентсе воспитани парас енӗпе тунӑ ҫитӗнӳсемшӗн тата нумай ҫул хушши тӑрӑшса вӑй хунӑшӑн район администрацийӗн 2014 ҫулхи октябрӗн 13-мӗшӗнчи 976-мӗш номерлӗ йышӑнӑвӗпе Шатракассинчи пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан тӗп шкулӑн физикӑпа математика учительне **Людмила Анатольевна АНДРЕЕВӐНА** район администрацийӗн Хисеп грамотипе наградӑланӑ.

Ял ҫыннисен ыйтӑвӗсене тивӗҫтерессин сферинче нумай ҫул хушши тӑрӑшса вӑй хунӑшӑн район администрацийӗн 2014 ҫулхи октябрӗн 21-мӗшӗнчи 1054-мӗш номерлӗ йышӑнӑвӗпе чикӗллӗ яваплӑхлӑ "Елена" обществӑн сутуҫӑ-кассирне **Галина Николаевна ВОДНИКОВӐНА** район администрацийӗн Хисеп грамотипе наградӑланӑ.

Муркаш шкулӗ уҫӑлнӑранпа 130 ҫул ҫитнӗ май

# Мухтавлӑ ҫул утса тухнӑ

***Ҫак кунсенче Муркашри пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан вӑтам шкул уҫӑлнӑранпа 130 ҫул ҫитет. Официаллӑ майпа 1884 ҫулхи ноябрӗн 14-мӗшӗнче уҫӑлнӑскер, 130 ҫул хушши аталану ҫулӗпе малаллах утӑмланӑ. Ҫак тапхӑрта кунтан пӗтӗмпе 6834 ҫын вӗренсе тухнӑ.***

**Пуҫламӑшӗ (1884 – 1906 ҫ.ҫ.)**

Вырӑнти халӑх ыйтнипе тата Халӑха ҫутта кӑларас ӗҫ министерствин 1884 ҫулхи июнӗн 24-мӗшӗнчи циркулярӗпе килӗшӳллӗн Муркаш ялӗнче 1884 ҫулхи ноябрӗн 14-мӗшӗнче О. Любимов священник чиркӳ прихут шкулне уҫнӑ. О. Любимов хӑй нумаях пурӑнайман, ҫӗре кӗнӗ. 1907 ҫулччен шкул синода пӑхӑнса тӑнӑ.

1884 ҫулта Муркашри чиркӳ прихут шкулне уҫнине ҫирӗплетекен документ шутӗнче – "Народные училища в Казанской губернии" кӗнеке. Ӑна 1888 ҫулта Хусанта пичетлесе кӑларнӑ. Кӗнекере палӑртнӑ тӑрӑх Муркашра вӑл вӑхӑтра 310 арҫынпа 308 хӗрарӑм пурӑннӑ.

Малтанхи шкул йывӑҫ хурал пӳртӗнче вырнаҫнӑ пулнӑ, вӗренме условисем тивӗҫтермен. 5 чӳречеллӗ класс пӳлӗмӗн тӑршшӗ те, сарлакӑшӗ те 5,25 метрпа танлашнӑ.

**Алексей Аристов** священник, чиркӳ прихут шкулӗн заведующийӗ тата саккунсене вӗрентекен, Муркаш шкулӗнче 1886 ҫулхи апрельтен тытӑнса ӗҫленӗ. Вӑл Хусанти тӗн семинарийӗн курсӗсене вӗренсе пӗтернӗ. Шкулӑн пӗрремӗш учителӗ псаломщик ывӑлӗ **Александр Петровский** пулнӑ, 1884 ҫулхи ноябрӗн 14-мӗшӗнче ӗҫлеме пуҫӑннӑ.

Малтанласа шкулта чӑвашсен 28 арҫын ачи вӗреннӗ. Вӗсем Муркашсӑр пуҫне хальхи Кашмаш (3 ача), Ҫурлатри (1 ача), Ҫӗньял Муркаш (4 ача), Шаптак Муркаш (2 ача) ялӗсенчен ҫӳренӗ. Анчах та курссене 2 арҫын ача кӑна вӗренсе пӗтернӗ.

1886 – 1887 ҫулсенче чиркӗвӗн хурал пӳрчӗ тӑвӑр пирки вӗренес шухӑшлисене пурне те йышӑнма пултарайман. Ҫуллен 10 – 15 арҫын ачана йышӑнмасӑр хӑварма тивнӗ.

1886 ҫулхи сентябрӗн 16-мӗшӗнче Козьмодемьянск уесӗнчи Шурча вулӑсӗнчи Муркашри чиркӳ прихут шкулӗн заведующийӗ А. Аристов ҫӗнӗ шкул тӑвасси пирки Козьмодемьянск уесӗн земство управин представителӗ В.И. Образцов патне ҫырупа тухать, хальхи вӑхӑтра кашни христианиншӑнах тата гражданиншӑнах пӗлӳ илни пӗлтерӗшлӗ пулнине, ҫӗнӗ шкул тусан ытларах ачана вӗренме илме май пулассине палӑртать.

Анчах та земство управи ҫӗнӗ шкул ҫуртне тума пулӑшма васкамасть. Ҫавӑнпа та А.И. Аристов земство шкулӗ валли Етӗрне уесӗнчи Патӑрьел ялӗнчи хӑйӗн ҫуртне пӑсса илсе килме сӗнет. Ҫапла тӑваҫҫӗ те. Муркашри ҫӗнӗрен тунӑ чиркӳ прихут шкулне тытса тӑма Козьмодемьянскри черетлӗ уес пухӑвӗ 1888 ҫулхи сентябрӗн 27-мӗшӗнче 200 тенкӗ уйӑрса пама йышӑнать. 1889 – 1890 вӗренӳ ҫулӗ валли вара 245 тенкӗ уйӑраҫҫӗ. Вӑл шутран: саккунсене вӗрентекен учитель валли 30 тенкӗ, учитель валли 120 тенкӗ, А. Аристова унӑн ҫурчӗпе усӑ курнӑшӑн тӳлеме 70 тенкӗ, ҫурта хутса ӑшӑтма 25 тенкӗ.



**Чиркӳрен сылтӑм енче Муркашри чиркӳ прихут шкулӗ (1884 ҫ.).**

1889 – 1890 вӗренӳ ҫулӗнче шкула 36 арҫын ача ҫӳренӗ, вӗсенчен 8-шӗ курссене пӗтернӗ. 1890 – 1891 вӗренӳ ҫулӗнче Муркаш шкулӗнче вӗренекенсен шучӗ 42 ачана ҫитнӗ, 1891 – 1892 вӗренӳ ҫулӗнче – 70 ачана. Ку тапхӑрта Козьмодемьянск уесӗнче пӗтӗмпе земство училищисем 36 ӗҫленӗ, вӗсенче 1052 арҫын ачапа 420 хӗр ача вӗреннӗ. 41 чиркӳ прихут тата хутла вӗренмелли шкула 1257 арҫын ачапа 174 хӗр ача ҫӳренӗ.

1892 ҫулта А.И. Аристов ҫине тӑнипе хӗр ачасен класне уҫнӑ. Вӗсем валли пӳлӗм А.И. Аристовӑн пурӑнмалли ҫуртӗнче уйӑрнӑ. 1892 ҫулхи октябрӗн 21-мӗшӗнче земство пухӑвӗ хӗр ачасен чиркӳ прихут шкулне тытса тӑма 75 тенкӗ уйӑрнӑ (малтан 100 тенкӗ уйӑрма пӑхнӑ пулнӑ). Класра 20 хӗр ача вӗреннӗ. Вӗсене дьякон мӑшӑрӗ **Анфиса Павлова** вӗрентнӗ.

19-мӗш ӗмӗрӗн 90-мӗш ҫулӗсен варринче Муркашри чиркӳ прихут шкулӗнче арҫын ачасемпе хӗр ачасене уйрӑммӑн вӗрентнӗ. 1898 – 1899 вӗренӳ ҫулӗнчен тытӑнса вӗсене пӗрле вӗрентме пуҫланӑ.

**В. ШАПОШНИКОВ хатӗрленӗ.**
**(Малалли ҫитес номерте).**

Асӑрханӑр, ан улталанӑр!

# Банк карттин номерне хӑв кӑна пӗл

Сирӗн банк карттин номерне ултавҫӑсем пӗлни вӗсене сирӗн счет ҫинчи укҫана вӑрлама май парать. Аферистсем ҫӗнӗрен те ҫӗнӗ меслет вӑя кӗртсе ҫынсене айвана тӑратса хӑвараҫҫӗ. Чи малтанах сирӗн карттӑна вӑхӑтлӑх ӗҫлеме чарни е сирӗн картта ҫинчен укҫа илни пирки телефон ҫине пӗлтерӳ яраҫҫӗ. Паллах, кун пек чухне чылайӑшӗ пӑшӑрханса ӳкет, ҫӑлӑнӑҫ шыраса ҫийӗнчех "ырӑ пичче, аппа" патне хирӗҫле шӑнкӑрав ярать. Вӗсем, паллах, "пулӑшма" пуҫлаҫҫӗ. Каярах вара ҫын аферистсен серепине лекет. Телефонпа ӑнлантарнӑ тӑрӑх вӑл банкомата ҫул тытать, вӗсем каланӑ цифрӑсене пусать, ҫапла майпа ҫеккунт хушшинче укҫа-тенкӗсӗр тӑрса юлать.

Аферистсен мелӗ вара ҫӗнелсех пырать. Вӗсем хӑйсене сирӗншӗн тӑрӑшнӑ пек кӑтартаҫҫӗ, картта номерне ыйтаҫҫӗ, ҫапла майпа сирӗн карттӑна ҫӗнӗрен ӗҫлеттерме пуҫлаҫҫӗ имӗш. Анчах та каллех счет ҫинчи укҫа-тенкӗ сирӗнтен вӗҫерӗнет.

Картта хуҫисен ҫакна яланах асра тытмалла: сирӗн номер, вӑл шутра пин-код тата картта вӑйра тӑракан тапхӑр сирӗншӗн кӑна пулмалла, ӑна никамӑн та тӗпчесе ыйтма ирӗк ҫук. Асӑрханулӑ пулмаллине ҫак факт та ҫирӗплетет. Пӗр ҫын ӳкерчӗк сутма Интернета пӗлтерӳ лартнӑ. Кун пеккине вара куҫран вӗҫертмен аферистсем. Ӳкерчӗк туянакан ҫын сутуҫӑ номерне ыйтнӑ, укҫа куҫарса пама шантарнӑ. Мӗн шухӑшлатӑр эсир? Сутуҫӑ счечӗ ҫине укҫа куҫма мар, унӑн хӑйӗн виҫӗ пин тенкинчен те уйрӑлма тивнӗ.

**ШӖМ пресс-службиӗ.**

Прокуратурӑран

# Ертӳҫӗ шалу тӳлес темен

Чапаев ячӗпе хисепленекен хуҫалӑх ертӳҫинче тимленӗ ҫынна ӗҫлекенсене шалу тӳлеменшӗн тата ӑна, должноҫри ҫынна, хуҫалӑх укҫи-тенкипе тӗллевсӗр усӑ курнӑшӑн айӑпланӑ.

Уголовлӑ ӗҫе район сучӗ иртнӗ уйӑхра пӑхса тухнӑ. Ҫамрӑк ҫын 11.06. 2008 – 03.04. 2014 тапхӑрта хуҫалӑха ертсе пынӑ. Ертӳҫӗ пулнӑ май хӑйне тата тӗп инженера административлӑ штраф тӳлеттерессинчен хӑтарнӑ, 5150 тенкӗ штраф шучӗпе хуҫалӑх кассинчен илнӗ.

2013 ҫулхи январь уйӑхӗнчен пуҫласа 2013 ҫулхи ноябрь вӗҫӗччен хуҫалӑхра вӑй хуракан 19 ҫынна ӗҫ укҫи тӳлемен. Ку тӗлӗшри парӑм 688705 тенкӗ. Ҫав вӑхӑтра вара хуҫалӑх кассинче тата счечӗ ҫинче ӗҫлекенсене тӳлеме укҫа ҫителӗклӗ пулнӑ.

Судра ертӳҫӗ пулнӑ ҫын хӑй айӑпне йышӑнман. Ӑна 110 000 тенкӗ тӳлеттерме йышӑннӑ.

**П. МАКЕЕВ, прокурор пулӑшуҫи.**

**Çĕр ĕçĕнче тата продукци тирпейлекен промышленноçра ĕçлекенсен республикăри уявне паллă турăмăр**

# Хамăр продукцие анлăрах çул парар

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.)

Чăваш Енре ял хуçалăх çулне пĕтĕмлетессине уй-хир ĕçĕсем вĕçлесен ирттересси – ырă йăлара. Ку хутĕнче те пурнăçланă ĕçĕсемшĕн савăнăç шевлипе тата малашлăх ĕмĕтсемпе тулнă ял ĕçченĕсем театра йышлă пухăнчĕç. Вĕсен калаçăвĕнче кашниййĕнех хăйсен ĕçĕпе кăмăллă пулни тата малашлăха çирĕп шанни, ума лартнă тĕллевсене пурнăçлама çирĕп кăмăл пурри палăрчĕ. Кăна ыранхи кун шанчăкĕ тесе йышăнма пулать.

Çĕр ĕçченĕсене тата просене уçăмлатма, çĕнĕ чикĕсем палăртма пулăшать. Кӳршĕсем аталанса пынине курса тăрса пирĕн те пĕр вырăнта лăпланса лармалла мар", – терĕ хăй лартнă ыйту çине ăнлануллă хуравласа.

Хăйĕн сăмахĕнче республика Пуçлăхĕ ял хуçалăх тата продукци тирпейлекен предприятисен ертӳçисене вырăнта ĕçлекенсен ĕç укçийĕ пирки те асăрхаттарса хăварчĕ:

– Паян ял хуçалăх продукцийĕн пур тĕсĕ те тивĕçлĕ хакпа сутăнать. Апла пулсан ĕçлекенсене йĕркеллĕ ĕç укçи тӳлеме



**Муркашсен Шупашкарти ентешлĕх членĕпе Г. Горлановпа район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев уявра.**

уттинчен юлманнисем ыттисемшĕн ырă тĕслĕх пулса тăраççĕ, – танлаштарулла калаçрĕ Сергей Владимирович.

Республика пĕчĕк харпăрлăх формиллĕ хуçалăхсене аталантарассине самантлăха та кун йĕркинчен кăлармасть. Кăçал вĕсем хăйсене аталантарма илнĕ кредит шайĕ унчченхи çулсен виçинчех сыхланса юлнă: 3,1 миллиард тенкĕ. Кунта çакна палăртса хăвармалла, килти хушма хуçалăх тытакан гражданесен пĕр пайĕ хăйсен ĕçне хресчен (фермер) хуçалăхĕн шайне çитерчĕ. Çавăнпа та хресчен (фермер) хуçалăхĕсене тĕллевлĕ пулăшассине патшалăх хăйĕн тивĕçĕ тесе йышăнать.

Савăнăçлă уявран пирĕн район делегацийĕ республика шайĕнчи ĕç кăтартăвĕсемпе паллашса, вĕсене хамăрăннисемпе танлаштарса çĕнĕ ӳсĕмсене çĕнмелли ĕмĕттĕллевсемпе таврăнчĕ.

Республика ертӳçисем каланине итленĕ май вĕсен сăмахĕсене эпĕ хамăр район атала-



**И. Тихонов ветеран-агрономпа район пуçлăхĕн И. Николаевăн шухăш-тĕллевĕ пĕрре.**

апат-çимĕç çителĕклĕ янтăларăмăр, сарайсемпе витесене хĕле тĕплĕ хатĕрлерĕмĕр. Ĕçлекенсен уйăхри вăтам ĕç укçи 15 пин тенкĕрен кая мар, – терĕ коллектива чысланă хыççăн фабрикăн ĕç тăвакан директорĕ С. Шпарев. Фабрика çĕнĕлĕхсемпе тан пынине çирĕплетекен тĕслĕх. Кунта талăксерен 35 тонна комбикорм кирлĕ пулсан, Германире туса кăларнă станци сехетре 10 тонна паха апат хатĕрлеме пулăшать. Ку вăл – ăнăçăвăн черетлĕ утăмĕ. Çакна шута илсех-тăр фабрикăра кăçал 74 миллион штук эко-



**Чкалов яч. хис. хуçалăхри делегаци (сулахайран сылтăмалла): кадрсемпе ĕçлекен инспектор Н. Никитина, В. Никифорова экономист, В. Егорова тĕп бухгалтер, Б. Никитин комбайнер.**

дукци тирпейлекен промышленноçра вăй хуракансене çак кун Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ăшшăн саламларĕ. Вăл тĕл пулура каланă сăмахсене уява хутшăннисем ансат тата пуриншĕн те ăнланмалла тесе йышăнчĕç.

– Агропромышенность комплексĕнче ĕçлекенсен тăрăшулăхĕпе Чăваш Енре пурăнакансем хăйсен сĕтелĕ çинче вырăнти паха продукципе ытлă-çитлĕ усă кураççĕ. Эсир вăй хунипех республикăри ялсен сăн-сăпачĕ тĕпрен улшăнать: çуртсене çут çанталăк газĕ кĕртрĕмĕр, ялсем патне асфальт сарнă çулсем çитрĕç, ялсенче пĕтĕмĕшле практика врачĕн офисĕсем, тĕслĕх библиотекăсем тата бассейнлă физкультурăпа спорт комплексĕсем ĕçлеме пуçларĕç. Çĕнĕ специалистсемпе çамрăк çемьесем пурăнмалли çурт-йĕр савăрма субсиди илеççĕ, хваттерлĕ пулаççĕ. Çакă ял хуçалăх производствине çĕнĕ технологисене пурнăçа кĕртсе малалла аталантарма, ял çыннисен пурнăç условийĕсене лайăхлатма пулăшать, – терĕ Михаил Васильевич хăйĕн сăмахне пуçланă май. – Пирĕн паянхи ӳсĕмсем – тĕрлĕ харпăрлăх формиллĕ хуçалăхсен ĕçченĕсемпе специалисчĕсем, ертӳçисем, наука ĕçченĕсем, çĕр ĕç отраслĕн ветеранĕсем кашни кун ырми-канми вăй хунин тӳпи. Вĕсене çакăншăн пурне те пысăк тав. Кризиссем килеççĕ те иртеççĕ, анчах пирĕн ыранхи пирки шутлама манмалла мар. Умра пуçăнман ĕçсем те пайтах. Вĕсене пурнăça кĕртесси – пĕрлехи тĕллев. Çак ĕçре эсир аталану тĕслĕхĕ пулса тăратăр. Сирĕн хыççăн ыттисем те шанчăклăн утĕç,

Малалла Михаил Васильевич уява хутшăнакансем умне ыйту лартрĕ. "Мĕн пурнăçлани лайăх, анчах çак условисенчех эпир татах та ăнăçлăрах ĕçлеме пултарнă-и-ха? Хирĕçлеместĕп. Паллах пултарнă. Хамăр вăйсене курса-пĕлсе тăни пире паян малашлăх тĕллевĕ-



**"Новая Юнга" хуçалăхра нумай çул тĕп агрономра ĕçленĕ Л. Илугинăпа чылай хушă районти вăрлăх инспекцине ертсе пынă А. Анисимовăшăн ял хуçалăх аталанăвĕнчи кашни кăтарту çывăх.**

те майсем пур. Çак кăтарту тивĕçлĕ шайра пулманни нумай ырă пуçарăва ура хурса пырать, отрасле аталанма чăрмавлать.

Уяври салам сăмахĕсене Михаил Игнатьев ĕç хастарĕсене чысланипе вĕçлерĕ. Вуншарăн тивĕçрĕç ырă ята. Муркашсем "Моргаушская" чăх-чĕп фабрикин ĕç тăвакан директорне С. Шпарева тата хамăр ентеше "Чăваш Республикин апатçимĕç фончĕ" хысна унитарлă предприятин директорне А. Федотова чысланипе кăмăллă юлчĕç.

Кĕскен чăх-чĕп фабрики пирки. Тирпейлĕх, тасалăх, хăтлăх ыйтăвĕсем – "Моргаушская" чăх-чĕп фабрикинче тĕп вырăнта. Производство пӳлĕмĕсенче çĕнĕлĕх хушăнсах пыни коллектив ыранхи кунпа пурăнни пирки калать.

– Хамăр лаптăксем çинче кăçалхи вырма ĕçĕсене вăхăтра вĕçлерĕмĕр, чăх-чĕп валли

логи тĕлĕшĕнчен таса çăмарта илме пăхаççĕ. Сăмах май, фабрика ку ӳсĕме çитни иртнĕ çулсенче пулманччĕ-ха.

Чăваш Енри çĕр ĕçченĕсемпе ял хуçалăх продукцине тирпейлекен промышленноçра вăй хуракансен савăнăçлă уявĕнче кăçал пурнăçланă ĕçсемпе паллаштарса ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – ял хуçалăх министрĕ Сергей Павлов анлă доклад туса пачĕ. Уйхирте ĕçлекенсене, выльăхчĕрлĕх пăхакансене тата ял хуçалăх продукцине тирпейлессипе ырми-канми тăрăшакансене саламласа çĕнĕ ӳсĕмсене çăварлăхлама ăнăçу суннă май министр кăçалхи ял хуçалăх ĕçĕсене тĕплĕн тишкерчĕ, вăл е ку ĕçре çĕнĕ технологисене алла илессипе хастар пулнисене ятран асăнчĕ, ыттисене вĕсенчен тĕслĕх илме сĕнчĕ.

– Эсир кашниех хăвăр ĕçре чунпа парăннă çынсем. Сирĕн

тăрăшулăхпа çут çанталăк кăларса тăратнă йывăрлăхсене пĕрле çĕнсе пыратпăр. Малашне те пĕр çыхăрах ĕçлесе пурăнасчĕ, тăван ене татах тĕреклетесчĕ, – терĕ Сергей Владимирович.

Раççей Федерацийĕн Правительствипе Чăваш Республикин Пуçлăхĕн пулăшăвĕпе пирĕн енре республика шайĕнчи нумай программа пурнăça кĕрсе пырать. Чăваш Енри ял хуçалăх предприятийĕсем федераци программисене те активлă хутшăнаççĕ. Пĕрлехи тăрăшулăхпа кăçал кăна республикăри çĕр ĕçченĕсем 2,2 миллиард тенкĕлĕх патшалăх пулăшăвĕпе усă курнă. Çавна май уйхирсене çĕнĕ техника сахал мар тухнă, çĕнĕ технологисем, пысăк тухăç паракан ял хуçалăх культурисем, вĕсене туса илессин тата тирпейлессин çĕнĕ мелĕсем пурнăça кĕнĕ.

Паян çакна çирĕплетсех калама пулать. Республикăри çĕр ĕçченĕ кăçаллăха хăй умне лартнă уй-хир ĕçĕсен тĕллевĕсене пурнăçларĕ, тырă-пулăпа çĕр улмине тата пахча çимĕçе пĕтĕмпех пухса кĕртрĕ. Республикипе пурĕ 530 пин – (пĕлтĕрхинчен 34 процент ытларах) тырă-пулă пухса илчĕ. Кунпа пĕрлех хресченсем çитес çулхи тухăç валли те çирĕп никĕс хывса хăварчĕç: агротехникăна пăхăнса пĕтĕмпе 89,5 пин гектар (иртнĕ çулхинчен 18 пин гектар нумайрах) кĕрхи культурăсем акса хăварчĕç, 184,2 пин гектар çинче (129,9 процент) çĕртме сухи турĕç.

Республикăра çĕр улми туса илесси унччченхи çулхинчен 5,2 процент сахалланнă (600 пин тонна). Çав вăхăтрах пахча çимĕç туса илесси малалла кайнă, хуçалăхсенче тырăлăх кукуруза туса илесси вăй илнĕ тата 5,6 пин гектара çитнĕ. Çак çĕнĕлĕхпе усă курас текенсем татах пуррине шутласан ку кăтарту чикĕ пулманни курăнать.

"Иккĕмĕш çăкăр" туса илесси чакнине ура хурас тĕллевпе Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М. Игнатьев пуçарнипе кăçал çĕр улми тата пахча çимĕç нумай вăхăт упранакан хранилищĕсем тума пулăшмалли патшалăх программи ĕçлеме пуçларĕ. Çакă çĕнĕлле шухăшлакан хресченшĕн тепĕр аталану çулĕ уçать.

Ӳсен-тăран отраслне аталантарни – обществăлла выльăх-чĕрлĕх секторне çĕнĕлĕхсемпе хĕç-пăшаллантарса малалла уттармалли ен. Ыранхи кунпа пурăнакансем çапла тăваççĕ те. ЧР ял хуçалăх министрĕ С. Павлов çак тĕлте уйрăм хуçалăхсене ятран асăнчĕ. Вĕсен шутĕнче пирĕн районти "Путь Ильича" агрофирмăпа "Моргаушская" чăх-чĕп фабрики те пур.

– Çакăн пек пысăк хуçалăхсене аталантарма кăçал çеç республикипе 6,7 миллиард тенкĕ кредит ресурсĕсемпе (иртнĕ çулхи çак тапхăртин 112 процентĕ) усă куртăмăр. Вăл шутра инвестици кредичĕсем 2,1 миллиард тенкĕпе (иртнĕ çулхи çак тапхăртинчен 2,8 хут нумайрах) танлашрĕç. Пурнăç

нăвĕпе танлаштарса пытăм. Тӳрех çакна калатăп. Чăваш Ен аталаннă май Муркашсем те çак çулпах пыни курăнать. Кунта район администрацийĕн пуçлăхĕн Р. Тимофеевăн шухăшĕсене илсе кăтартни те вырăнлă пулмалла: "Ял хуçалăх ĕçĕсене пĕтĕмлетни – пурнăçланă ĕçсен уявĕ çеç мар, мĕн туса çитерейменнине сӳтсе явса малашлăха палăртса çирĕппĕн калаçмалли сăлтав та. Мĕн пурнăçланипе лăпланма юраманнине ăнланатпăр. Ăна тĕпе хурса паян хамăрăн малашлăх планĕсене палăртатпăр. Кăçалхи ĕç кăтартăвĕсене кура вĕсем те пурнăçланасса шанатпăр".

Республикăри хресченсен професси уявне Муркашсем кăçал япăх мар кăтартусемпе кĕтсе илчĕç. Уй-хир ĕçĕсенче наука çитĕнĕвĕсемпе пĕлсе усă куракан, ял хуçалăх техникине тăтăш çĕнетсе агротехника ыйтăвĕсене пăхăнса ĕçлекен, çĕр пахалăхне çулсерен хăпартса пыракан, пысăк репродукциллĕ çĕнĕ сортсемпе усă куракан хуçалăхсем çанталăкăн кирек епле условийĕсенче те пысăк тухăç илме пултарнине çирĕплетрĕç. Ку вăл çапла пулмалла та.

Хамăн сăмахăма С. Сретинскийпе В. Горбунов фермерсен сăмахĕпе вĕçлетĕп: "Мĕн тунипе лăпланса ларас марччĕ. Малалла туртăнса, çĕнĕ технологисене алла илсе курăмлăрах ӳсĕмсем тăвасчĕ".

Уявра пулнă май вĕсем пуласси пирки иккĕленӳ юлмарĕ.

**Анатолий БЕЛОВ.**

**Спорт хыпарĕсем**

# Çитĕнӳсем çук мар

**Октябрĕн 24-мĕшĕнче** Канаш районĕнчи Шăхасанти "Импульс" физкультурăпа спорт комплексĕнче Канаш районĕнчи пĕрремĕш СССР спорт маçтăрне, Чăваш Республикин физкультурăпа спортăн тава тивĕçлĕ ĕçченне, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ тренерне Геннадий Смирнова асăнса ирĕклĕ майпа кĕрешессипе 2000 – 2001 çулсенче çуралнă яшсем хушшинче республика турнирĕ иртнĕ. Муркаш районĕнчен ку ăмăртусене "Сывлăх" ФСК-ДЮСШ воспитанникĕсем хутшăннă. Муркаш шкулĕнче вĕренекен Андрей Павловпа Данил Дмитриев 3-мĕш вырăнсене çĕнсе илме пултарнă, бронза медальсене тивĕçнĕ.

**Октябрĕн 25-мĕшĕнче** Канаш районĕнчи Шăхасанти "Импульс" физкультурăпа спорт комплексĕнче ирĕклĕ майпа кĕрешсе республикăра мала тухассишĕн 1998 – 1999 çулсенче çуралнă яшсемпе хĕрсем ăмăртнă. Москакасси шкулĕнче вĕренекен Екатерина Бычкова 49 килограмлă виçе категорийĕнче 3-мĕш пулнă, унăн та бронза медаль.

**Октябрĕн 23 – 26-мĕшĕсенче** Саратов облаçĕнчи Вольск хулинче бокс енĕпе регионсем хушшинчи 11-мĕш турнир иртнĕ. Ăна Совет Союзĕн Геройне В.В. Трихалкина халалласа йĕркеленĕ. Муркашри "Сывлăх" ФСК воспитанникĕсем Иван Налимовпа Анатолий Кожевников ăмăртура 1-мĕш вырăнсене, Алексей Николаев 2-мĕш вырăна çĕнсе илме пултарнă.


**НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ любой сложности. Фотопечать, двухуровневые. Тел.: 381-182. 6-10.**




**Кивелнĕ электропроводка – пушар хăрушлăхĕ, кайран вара чавса çывăх та çыртма çук. Ялти çуртсенче, хваттерсенче кивелнĕ электропроводкăна, счетчиксене çĕнĕрен улăштаратпăр. Материалĕ хаклă мар.**
**Тел.: 8-902-661-70-57, 8-937-015-35-40, 62-1-37. 1-5.**

**СПУТНИКОВЫЕ АНТЕННЫ. АКЦИЯ!!! Снижение цен! ТРИКОЛОР, ТЕЛЕКАРТА от 3000 руб. Обмен старых приемников на новые + поправка антенны бесплатно! Дилер, установщик по району. Тел.: 8-906-385-29-30.** 2-10.

**Продаем: доски 25–50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Цена договорная, доставка по району бесплатно.**
**Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 3-10.**

**СПУТНИКОВЫЕ АНТЕННЫ ТРИКОЛОР.**
**ТЕЛЕКАРТА - от 3000 руб. ОБМЕН. ГАРАНТИЯ.**
**Тел.: 8-905-345-77-19. 8-10.**

**Требуются рабочие строительных специальностей: маляры, штукатуры, каменщики, гипсокартонщики, разнорабочие. Работа в Москве и МО.**
**Тел.: 8-909-151-90-92. Юрий. 10-10.**

**НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ**
**Тел.: 8-927-667-40-92.** 12-27.

**ПРОДАЕМ ПИЛОМАТЕРИАЛЫ ОБРЕЗНЫЕ: 25х100; 25х110; 25х120; 25х130; 25х150; 25х200; 50х120; 50х150; 50х180; 50х200. БРУСЬЯ: 100х100; 100х150; 100х200; 150х150; 150х200. БЛОКИ, КИРПИЧИ, ЦЕМЕНТ.**
**Тел.: 8-903-346-40-58, 8-905-346-63-36. 6-10.**


**Пĕлтерӳсем. Объявления**





**Урпа тата сумалли качакасем сутатăп, лайăх сĕт паракан ĕнесем туянатăп. Тел.: 8-927-847-20-55, 8-952-021-75-90.**

**Продаем керамзитобетонные блоки, кирпич любого вида. Услуги манипулятора.**
**Тел.: 8-960-307-41-78. 1-17.**

**Ĕне, вăкăр, тына, пăру туянатпăр.**
**Тел.: 8-987-665-02-13. 8-10.**

* * *

**Продается двухкомнатная квартира в с. Моргауши. Тел.: 8-952-024-60-56, 8-953-024-62-25.**

* * *

**Качака такисем сутатăп. Тел.: 8-953-016-95-37.**

* * *

**Январь уйăхĕнче пиллĕкмĕш пăруламалли хурашурă тĕслĕ ĕне сутатпăр. Тел.: 8-960-309-07-93.**


* * *

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:200701:316, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Герасимов Владислав Гаврилович, проживающий по адресу: Россия, Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Фруктовая, д. 8, кв. 101.

Проект межевания земельного участка подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:200701:316. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Тораевское сельское поселение.

С проектом межевания земельного участка можно ознакомиться по адресу: 429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельного участка принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5, ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары, пр. Московский, д. 37.

* * *

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:260301:1, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: администрация Чуманкасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики, расположенный по адресу: Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, Чуманкасинское сельское поселение, д. Одаркино, ул. Центральная, д. 2.

Проект межевания земельного участка подготовлен кадастровым инженером Кольцовым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-27. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:260301:1. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Чуманкасинское сельское поселение.

С проектом межевания земельного участка можно ознакомиться по адресу: 429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельного участка принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5, ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары, пр. Московский, д. 37.

* * *

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:220701:1, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: администрация Чуманкасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики, расположенный по адресу: Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, Чуманкасинское сельское поселение, д. Одаркино, ул. Центральная, д. 2.

Проект межевания земельного участка подготовлен кадастровым инженером Кольцовым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-27. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:220701:1. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Чуманкасинское сельское поселение.

С проектом межевания земельного участка можно ознакомиться по адресу: 429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельного участка принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5, ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары, пр. Московский, д. 37.

* * *

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Кадастровым инженером Демьяновой Людмилой Владимировной, квалификационный аттестат кадастрового инженера № 21-14-28, почтовый адрес: 428038, Чувашская Республика, г.Чебоксары, М.Залка д.11, кв.175, адрес электронной почты demyanova_milla@mail.ru, контактный телефон 8(8352)57-06-51, подготовлен проект межевания земельного участка для выдела земельного участка в счет земельных долей из исходного земельного участка с кадастровым номером 21:17:140501:2, расположенного по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Хорнойское сельское поселение.

Заказчиком проекта межевания земельного участка является Хорнойское сельское поселение Моргаушского района Чувашской Республики, зарегистрированный по адресу: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, Хорнойское сельское поселение, д. Хорной, ул. Новая, д. 14, телефон: 8(83541) 62-1-44.

С проектом межевания земельного участка можно ознакомиться в течение 30 календарных дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 428022, Чувашская Республика, г.Чебоксары, ул.50 лет Октября, д.19.

Обоснованные возражения относительно размера и местоположения границы выделяемого в счет земельных долей земельного участка принимаются в течение 30 календарных дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 428022, Чувашская Республика, г.Чебоксары, ул.50 лет Октября, д.19, а также в филиале ФГБУ ФКП Росреестра по Чувашской Республике по адресу: Чувашская Республика, г.Чебоксары, Московский проспект, д.37.


* * *

**СТРОЙМАТЕРИАЛЫ. Продаю с доставкой: кирпич керамический, силикатный (любых цветов); блоки керамзитобетонные, газосиликатные, фундаментные, пеноблоки; кольца колодезные; трубы асбестоцементные, профильные; арматуру, цемент; сухие смеси, шифер, рубероид, профнастил, пиломатериалы. Металлоконструкции: гаражные ворота, калитку, забор, беседку, теплицу, козырьки (навесы), решетки, кладочные сетки, банные печи, мангал, скамейки и т.п. Услуги крана-манипулятора. Тел.: 8-965-68-111-55, 8-937-01-04-222. 8-10.**

* * *

**Чупнă качака путеккисемпе качака такисем сутатпăр.**
**Тел.: 8-937-957-25-68.**

* * *

**Пĕр уйăхри хурашурă вăкăр сутатпăр.**
**Тел.: 8-906-131-60-25.**


# Николай Лукич ЯКОВЛЕВ



2014 çулхи ноябрĕн 5-мĕшĕнче, 90 çула кайса, СССР журналистсен союзĕн членĕ, Чăваш Республикинчи художниксен союзĕн членĕ, Чăваш АССР культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Чăваш Ен Халăх академийĕн действительнăй членĕ, график-сатирик, писатель-публицист, Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕ, районăн Хисеплĕ гражданинĕ, районти "Çĕнтерӳ ялавĕ" хаçатăн штатра тăман корреспонденчĕ Николай Лукич Яковлев пирĕнтен ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайрĕ.

Н.Л. Яковлев 1925 çулхи январĕн 31-мĕшĕнче Муркаш районĕнчи Актай ялĕнче колхозник çемйинче çуралнă. Шкултан вĕренсе тухсан хăйĕн ĕç биографине Панкли ял Совечĕн секретарĕнчен пуçланă.

18 çул тултарсан, 1943 çулхи март уйăхĕнче, Н.Л. Яковлев Тăван çĕр-шыва хӳтĕлеме тухса каять. 70-мĕш зенитпа артиллери дивизийĕнче нимĕç фашисчĕсемпе çапăçнă. 1945 çулхи июль уйăхĕччenex çак дивизире радиотелеграфист пулать вăл. Унтан тепĕр 5 çул службăра тăрать.

Николай Лукич шкулта вĕреннĕ чухнех ӳкерме юратнă. Çавăнпах ĕнтĕ хăйĕн ĕмĕтне пурнăçа кĕртес шутпа 1950 çулхи сентябрь уйăхĕнче Шупашкарти художество училищине вĕренме кĕнĕ. 1956 çулхи июль уйăхĕнче унтан ăнăçлă вĕренсе тухнă.

Н.Л. Яковлев пĕрмаях тĕрĕслĕхшĕн çунатчĕ. 1956 çултан тытăнса 1967 çулхи январь уйăхĕччен республикăра тухса тăракан "Капкăн" журналăн художество пайĕн заведующийĕнче, кайран журналăн штатра тăман художникĕ пулса тăрăшнă чухне те пурнăçри çитменлĕхсене, тĕрлĕрен йăхяха хăйĕн ӳкерчĕкĕсенче питленĕ. Вăл Пĕтĕм тĕнчери "Сатира – миршĕн кĕрешессинче" выставкăсене, Пĕтĕм Союзри, Раççейри, республикăри тĕрлĕ куравсене хутшăннă. Çакăншăн тата тĕрлĕ хаçат-журнала шаржсемпе илемлетнĕшĕн вăл Иван Мучин премийĕн лауреачĕ пулса тăнă. Николай Лукич хăйĕн ĕçĕсен уйрăм выставкисене те тăтăшах йĕркеленĕ. Унăн пултарулăх мастерскойĕнче 1000 ытла ĕç упранать.

1961 çулхи октябрь уйăхĕнчен тытăнса 1985 çулччен Н.Л. Яковлев – Шупашкарти телевидени студийĕн тата Чăваш пукане театрĕн художникĕ. Çав хушăрах "Капкăн" журналта та вăй хунă.

Н.Л. Яковлев чăваш халăх культурине аталантарассишĕн нумай вăй хунă. Ф.С. Васильев ячĕллĕ музея туса хурассишĕн ырми-канми тăрăшнă. Вăл Тăван Ен историйĕпе унăн çыннисем çинчен çырнă статьясем район хаçатĕнче, республикăра тухса тăракан хаçат-журналсенче пичетленнĕ.

Николай Лукич кĕнекесем те чылай çырнă. Вăл – "Сурăм çăлтăрĕсем" (2006 ç.), "Тернистый путь художника" (2007 ç.), "Кун-çул эрешĕсем" (2008 ç.), "Асăмри" (2010 ç.), "Все из жизни" (2012 ç.) кĕнекесен авторĕ.

Н. Л. Яковлев спортпа та питĕ туслăччĕ. Çитĕнекен ăрушăн ку енĕпе ырă тĕслĕхчĕ.

Пултаруллă ентешĕмĕрĕн ĕçне çĕр-шывра тивĕçлипех хакларĕç. Николай Лукича 1960 çулта СССР журналистсен союзĕн,1995 çулта Чăваш Республикин художниксен союзĕн членне илнĕ. 1985 çулта вăл "Чăваш АССР культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ" хисеплĕ ята тивĕçнĕ. Ăна "Чăваш халăх академикĕ" (2000 ç.) хисеплĕ ят панă. Н.Л. Яковлева Аслă Отечественнăй вăрçăн 2-мĕш степень орденĕпе, 12 медальпе наградăланă.

Н.Л. Яковлевăн çутă сăнарĕ яланах пирĕн чĕрере упранĕ.

**Депутатсен районти Пухăвĕ, район администрацийĕ.**

Администрация Моргаушского района выражает глубокое соболезнование главе Александровского сельского поселения С.Г. Никифоровой, ее родным и близким, по поводу кончины отца

**ПЛАТОНОВА**
**Георгия Платоновича.**

"Çĕнтерӳ ялавĕ" хаçат редакцийĕн коллективĕ вăрçăпа ĕç ветеранĕ, пирĕн сумлă ялкор

**Николай Лукич**
**ЯКОВЛЕВ**

вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата тăванĕсемпе, ĕçтешсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Николай Лукич çутă сăнарĕ пирĕн чĕресенче ĕмĕр упранĕ. Вăл тунă ырă ĕçсене ентешсем нихăçан та манмĕç.

Сосновкăри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулпа Ваçкассинчи ИКЦ коллективĕсем нумай çул шкул директорĕнче, химипе биологи учителĕнче вăй хунă

**Георгий Платонович**
**ПЛАТОНОВ**

вилсе кайнă пирки унăн тăванĕсемпе тата çывăх çыннисемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтереççĕ.

Шурчари пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкул коллективĕ çак шкулта нумай çул учитель, вăрçă вăхăтĕнче директор пулса ĕçленĕ

**Елизавета Ефимовна**
**ТИМОФЕЕВА**

вилсе кайнă пирки унăн çемйипе, тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

**Прогноз погоды**

| | четверг 6 ноября | | | | пятница 7 ноября | | | | суббота 8 ноября | | | | воскресенье 9 ноября | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 03 | 09 | 15 | 21 | 03 | 09 | 15 | 21 | 03 | 09 | 15 | 21 | 03 | 09 | 15 | 21 |
| Облачность, % | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки, мм | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура, °С | **+1** | **+2** | **+5** | **+3** | **+2** | **+3** | **+4** | **+2** | **+1** | **+3** | **+6** | **+5** | **+5** | **+6** | **+8** | **+5** |
| Ощущается как, °С | -2 | -1 | +3 | +2 | -0 | 0 | +1 | -2 | -2 | -1 | +3 | +1 | +3 | +4 | +6 | +2 |
| Давление, мм | 748 | 748 | 749 | 751 | 752 | 752 | 752 | 752 | 751 | 750 | 751 | 752 | 752 | 751 | 753 | **756** |
| Влажность, % | 90 | **95** | 87 | 90 | **91** | **95** | 86 | 90 | 90 | **95** | 84 | 88 | 89 | **95** | 86 | 82 |
| Ветер, м/с | 3 | 3 | 2 | 1 | 2 | 3 | 4 | 5 | 3 | 4 | 5 | 5 | 2 | 3 | 3 | 3 |
| | З | Ю-З | Ю-З | З | С | В | В | Ю-В | Ю-В | Ю | Ю | Ю-З | Ю-З | Ю-З | З | С-З |
| Солнце восход / заход | | 07:11 | 16:01 | | | 07:13 | 15:59 | | | 07:15 | 15:58 | | | 07:17 | 15:56 | |
| Луна восход / заход | | 16:00 | 06:07 | | | 16:32 | 07:25 | | | 17:14 | 08:34 | | | 18:00 | 09:38 | |


**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
**Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви**

**ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин “Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ” Чăваш Республикин хай тытăмлă учрежденийĕ.**

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

**Редакципе издатель адресĕ: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.**
**ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, бухгалтери - 62-1-35,**
**пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕсем - 62-1-38.**
**Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru**

**Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.**

**Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.**
**Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.**
**Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.**

**ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.**
**Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.**
**Номер дежурнăйĕ А.И. Волкова.**
**Пичете панă 05.11.2014 ç.**
**Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.**
**Заказ Тираж 4829.**

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.